# «Хамăр яла» ан варала,

## е Эрех кĕленчисене илемлетме кирлех-ши?

Пасар ĕмĕрĕ пурнăçа пысăк улшăнусем кĕртет. Тавар туса кăларакансене те, хатĕр тавара сутакансене те ăнланма пулать: сутăнман япалапа никамăн та аппаланас килмест. Çавăнпа та пуçаруллă предпринимательсем тавара мухтамалли, çиелтен те пулин хитрелетмелли майсем шыраççĕ.

Тĕслĕх шыраса инçе кайма кирлĕ мар – эрех-сăра кĕленчисем тӳрех куç умне тухаççĕ. Мĕнле кăна илемлетмеççĕ вĕсене, этем ăстăнне арпаштаракан шĕвек тултараканскерсене?

Эрех лавккинчи, сентре çинче шăкăриех лараççĕ илĕртӳллĕскерсем: «Çул курки», «Золотое кольцо», «Мягков», «Акатуй»...



А. Плеханов ӳкерчĕкĕ

Каç пулттипе лавкка çумĕнче çакнашкал ӳкерчĕк курăнчĕ. Виçĕ арçын пĕр шухăшлă пулнă та кĕленчене тĕппипех пушатнă. Ӳсĕрскерсем аран-аран пускалаççĕ, тăвата уран упаленменни кăна. Çавăнтах пушă кĕленчи те. «Хамăр ял» тесе илемлетнĕскер. Хамăр яла вараласçĕ-иç кусем.

Лавккана кирлĕ ĕçпе пынă чух курава лекнĕн туйăннăччĕ, тухса килелле кайнă чухне килпетсĕр çак ӳкерчĕк шухăша ячĕ. Пирĕн общество чăннипех те ĕçке хирĕç кĕрешесшĕн пулсан рекламăра та хăш-пĕр улшăнусем кĕртмелле мар-ши? Хаяр эрех-сăрана ачаш, пылак, чаплă ятсем париччен ăна чăн тивĕçлĕ ятпах – йӳсек тутăллă пулнине палăртсах – кăларни халăхшăн усăллăрах пулĕччĕ. Сывă пурнăçшăн кĕрешекенсен пĕрлешсе пĕр шухăш тытма вăхăт: сывлăхшăн сиенлĕ таварăн çынна илĕртмелле мар, хăйĕнчен тĕртсе ямалла.

# Асап – турă панă инкек мар

Ăна РФ УК 117 статйин 1-мĕш пайĕпе айăпласа 10 уйăхлăха кирпĕч шутлама ăсатнă. Районти прокурор çумĕ, юстицин аслă советникĕ А.Иванов пĕлтернĕ тăрăх – çакă паллă: килпетсĕр ĕç-пуç пĕр çемьере, упăшкипе арăмĕ хушшинче, пулса ирнĕ.

Упăшки эрех ĕçнĕ чухне арăмне шыв ĕçсен те пырать теççĕ халăхра. Анчах Шупашкар районĕнчи Вăрманкасра пурăнакан 41 çулти арçын эрехпе минренĕ вăхăтра арăмне шывпа мар, яланах çупкă-тапкăпа хăналанă. Хăш-пĕр чухне ку та çителĕксĕр пек туйăннă, çавăнпа аллисене ирĕке ярсах хĕрарăма хĕн кăтартнă. Асаплантару вăраха тăсăлнă пулин те лешĕ çакăн пирки йĕркелĕх хуралçисене пĕлтермен. Упăшкинчен шикленнĕ-ши е хăйне асап кӳрекене хĕрхеннĕ-ши? Çапах та усал хыпар килтен тухнă-тухнах.

Шупашкар районĕн миравай судйин 2014 çулхи нарăсăн 6-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн пуçтаха вырăна лартнă. Малашне вăл юсанасса, çемйери тӳнтерле пурнăç ырă енне çаврăнасса кĕтмелли çеç юлать.

**Н.СУЙМАНОВ**



# Пукане çĕклесе çӳресен

Ирăпа Шурик ман куç умĕнче ӳссе çитĕнчĕç. Амăшĕсем район больницинче пĕр каçра çăмăлланнă вĕсен. Пĕри ывăл çуратнă, тепри – хĕр. Çуралнăранпах пĕрле ачисем. Ара, кӳршĕсем-çке. Ĕçе кайнă чухне ирсерен тĕл пулаттăм шĕвĕрккесене. Вĕсем те «ĕçе» васкатчĕç. Ача садне. Алăран çавăтса, çитĕннĕ çынсем пек калаçа-калаçа утатчĕç. Уйрăмах çакă асра юлнă: Шурик Иринăн пуканине çĕклесе пыратчĕ. Шкула çӳреме пуçласан та уйрăлмарĕç кӳршĕсем. Халĕ Шурик хĕр пĕрчин пуканине мар, сумкине йăтса çӳреме тытăнчĕ. Кайнă чухне те, таврăннă чухне те. Сумки вара çулсерен йывăрлансах пычĕ. Шкул хыççăн вĕренме иккĕшĕ те хулана кайрĕç. Кайнă-килнĕ хушăра Шурик çаплах кӳршĕ хĕрĕн сумки-кутамккине йăтрĕ те йăтрĕ.

– Шурик, эсĕ Иринăн носильщикĕ пулмах çуралнă курăнать, çаплах ун сумки-хутаççине сĕтĕрсе мекĕрленен, – шӳтлĕн асăрхаттаранçи пултăм ăна пĕррехинче. – Хăçанччен тăсăлать ку?

– Туйччен, – йăл кулчĕ каччă.

Çакăн хыççăн нумай та вăхăт иртмерĕ – Шуриксен пӳрчĕ умне тĕрлĕ тĕслĕ хăмпăсемпе илемлетнĕ машинăсем пĕрин хыççăн тепри пыра-пыра чарăнчĕç. Малти машинин пĕр алăкĕнчен – Шурик, тепринчен шап-шурă тумлă Ирина тухрĕç. Каччă çавăнтах хĕре икĕ аллипе хăй умне меллĕн çĕклесе илчĕ те усă хапхаран йăтсах кĕрсе кайрĕ. «Паян хĕрĕн япалисене мар, хăйне çĕклесе илчĕ, – çиçсе иртрĕ шухăш пуçра. – Çак куна кĕтсе илме хатĕрленнĕ иккен ман кӳршĕ».

Хулара пурăнакан çамрăк мăшăра чылайранпа курманччĕ. Ĕнер урамра тĕл пулсан тĕлĕнсех кайрăм: Шурик каллех «пукане» çĕкленĕ. Чăтса тăраймарăм сăмах хушмасăр:

– Александр, çаплах Иринăн пуканине йăтса çӳретĕн иккен-ха.

– Çу-ук, ку пукане Ирăн çеç мар. Ăна иксĕмсĕр ăсталанă, – кăмăллă кулăпа çиçсе хуравларĕ телейлĕ ашшĕ.

**А.САВЕЛЬЕВ-САС**




# Нумай юлмарĕ

Шăл туни шыçса кайрĕ те мана урасем ирĕксĕрех больницăна илсе çитерчĕç.

Манашкал инкеке лекнĕ çын кунта паян сахал мар иккен. Паччушки, кăритур тулли çын ларать! Паллах, ку мана пачах савăнтармарĕ. Шăл ыратнă чухне пуç та çурăлса тухасла ыратать вĕт.

Пĕр пушă пукан тупрăм та сывлăш çавăрас тесе меллĕрех вырнаçса лартăм.

– Нумай юлмарĕ ĕнтĕ! – пĕрре салхуллăн, тепре телей çитессе шаннăн пĕлтерчĕ юнашар ларакан арçын. Хăй чухăнрах тумланнă, янахне шур тутăрпа çыхнă – шăлĕ сурнăран пулас.

– Мĕн пирки çак эсĕ? – ыйтрăм кӳршĕрен, хамăн вара сасă аран-аран тухать.

– Коммунизм! Акă мĕн, – тесе хучĕ вăл хăлхине тата лĕпкине хупласа тăракан тутăрне аякалла шутарнă май.

Аташакан этем çумĕнчен тăрса тӳрех алăк патнелле тапса сикес шухăш çуралчĕ, çакна хăй те сисрĕ пулас.

– Çутă малашлăха çитесси 10 минут кăна юлчĕ, – терĕ вăл аллинчи кивĕ сехетне тĕллесе. – Тĕрĕсрех каласан, 9 минут та 44 çеккунт кăна чăтас пулать.

Шăп та лăп вицĕ сехет çитсен чирлисене тӳлевсĕр сиплеççĕ иккен. Ыратакан шăла пĕр пуссăр тăпăлтарса кăлараççĕ. Ирхине килекенсем вара укçа тӳленĕ.

Акă мĕншĕн «çутă малашлăх» пирки аташнă манăн кӳршĕ.

**Г.ХАЙХИ**

## Кулăш кӳтĕр пулăшу

«Капкăн» теççĕ, ватă теççĕ,
Тăхăр вунна капашать.
Асăмрах: çĕмĕрттеретчĕ
Эп ӳстернĕ паттăр йыш.

Çыншăн пултăм çирĕп хӳтлĕх,
Куртăм сумлă пархатар.
Халĕ те хаваслăх кӳтĕр
Манăн йышлă паттăр çар.

**«КАПКĂН»**



**– Ан тап, пушмаку тăпăлса тухать.**
– Не пинай, новые ботинки порвешь.

**Х. АХТЯМОВ ӳкерчĕкĕ**



**– Ăшаласа çиех мана, сан арăму ыйтнине пурнăçламастăп!**
– Лучше зажарь меня, чем я исполню желания твоей жены!

**Г. Козлов ӳкерчĕкĕ**

## Эпĕ – критик

Чаплă критик эпĕ пулăп.
Эх, кама-ши сунтарам?
Мулентей ытла та сумлă,
Журналта ун ашшĕ – ЗАМ.

Тӳркĕллиев питĕ шăллă –
Çиес мар ун çупкине.
Шапăлтиев хамăн шăллăм –
Кӳрентерĕп мĕскĕне.

Юлхавпи сăвви пит япăх –
Пултăрин: хăй чăн чечек!

Эп унпа пĕрре пит лайăх
Кантăм Атăл хĕрринче.

Аса илтĕм: мухмăр-сухмăр
Пуçăма минретнĕ чух
Эпĕ юлнăччĕ пĕр пуссăр –
Пулăшмарĕ Кĕтерук!

Журналта ун ашшĕ çуккă,
Хĕрĕ те хăй чĕмсĕр çех.
Вăл мана çитермĕ çупкă –
Критиклем ăна эп, эх!..

**Анатолий ЫХРА**

## Йывăр çĕклем

Йывăр çĕкленĕскер
Тайкаланса утать,
Ыттисенчен кая юлса
Кана-кана ларать.
Малтисене тарăхнипе
Шурă куçне çавăрттарать.

Ан тӳпеле, ан купала.
Çĕклем вăл – кăткăс япала.

**Светлана АСАМАТ**

## Икĕ пит

Икĕ питлĕ çын – пуç ватмăш,
Тупсăмне тупаймăн час.
Кушакла та çулланать вăл
Е пăхать çӳлтен анчах.

Тусăмсем, пĕрле шутлар-и
Ку пуç ватмăша çапла:
Икĕ пит çине пайланнă
Пĕр çынран мĕскер юлать?

Çурма çын тесе кăлартăм
Чыс-хисепĕн тупсăмне.
Пурнăçра та çур хак парĕç
Ылмашуллă питсене.

Тав тура
ăна пӳрменшĕн
Икĕ çыншăн пурăнма.
Вăкăра вăйпа çĕнсен те
Хакĕпе çур çын кăна.

**Николай ИШЕНТЕЙ**

## Таркăн ĕне

Чипер пурăннă çĕртех пиллĕк пăрулană ĕне ӳксе вилчĕ. Ачамсене пĕчĕкрен пĕр пĕлĕшĕм хĕрхенчĕ, лайăх ĕне тупса паратăп терĕ. Ĕнине питĕ мухтаса пĕтерчĕ:

– Ун урисем те вăрăм, кĕтӳрен нихăçан кая юлса килмест. Сĕт хутаçĕсем пысăках мар та, сĕтĕнче çу хисепĕ пысăк.

Ĕни пĕрре çеç пăрулană иккен. Каярах сĕт хутаçĕсем те пысăкланĕç.

Пĕлĕшĕме шантăм. Вăхăт тупса ĕнене пăхма кайрăм. Пырса кĕрсенех ĕне ман пата пырса алăсене сĕртĕнчĕ. Тĕсĕ кăмăла кайрĕ. Çавăтса килтĕм шăмат кун, кĕтӳ янă хыççăн. Тепĕр кунах ĕнене ял кĕтӳне ятăм. Кĕтӳ ачисем каланă тăрăх – ман ĕне ялан тарасшăн. Çимест те пулас. Хырăмĕ пуш-пушах. Тăрук вăрăм ураллăскер малтанхи хуçи патнех тарса кайнă. Юрать-ха тĕлне пĕлетĕп. Çапах та ачасем валли сĕт пултăр тесе усрас терĕм. Çук, пулмарĕ усрасси. Виççĕмĕш хут тарсан хамăн та чăтăмлăх пĕтрĕ. Сĕтсĕр ĕнене, кĕтӳре çӳременскерне, кайса та илмерĕм. Хăйсем те килсе памарĕç. Телефонпа çеç шăнкăравласа пĕлтерчĕç.

**И. ЕРОФЕЕВ.**
**Патăрьел районĕ**

## Васкакан шăтăка сикет

Вова хăйсен умĕнчи çăла тахçантанпах юсама ĕмĕтленет-ха. Вунă метр тарăнăш çăл чавса юманран пура антарасси çăмăл ĕç мар. Çакна пурнăçлама нумай тар тăкмалла тата мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ. Çăла пура янăранпа вăтăр çул та иртнĕ ĕнтĕ. Çавах та Шоркка çыннисем шыв ăсма пĕтĕм ялĕпех çак çăл патне утаççĕ.

Анчах та юлашки икĕ çулта пура çĕрĕшрĕ. Çитес вăхăтрах йăтăнса анма пултарать.

Вовăн пусĕ аванах ĕçлет-ха.

Çавăнпа та вăл тимĕрбетон ункăсем туянчĕ. Ку шанчăклăрах.

Çур аки ĕçĕсем вĕçленсен ункăсене антармалла. Автокран та тупăнчĕ. Пĕтĕм çынсем пуçтарăнчĕç. Чи малтанах çăлти шыва насуспа уçлаттарса кăларчĕç. Кайран юшкăна витресемпе кăларчĕç. Ун хыççăн тимĕрбетон ункăсене автокранпа антарма пуçларĕç. Икĕ унка антарсан ĕç чарăнса ларчĕ, виççĕмĕш ункă анмасть. Çăл пури хĕсĕннĕ. Александров Валерике çăла антарса ячĕç. Анчах пурана пуртăпа чутласа ĕç тухас çуккине ăнланчĕç. Ĕçе çăмăллатмалли меслет шыраса тупрĕç.

– Бензопилапа уса курмалла, – пулчĕ сĕнӳ. Валерик бензопилана чĕртрĕ те кĕçех тĕтĕм ăшăнче курăнмиех пулчĕ. Çав вăхăтра аялтан «Пулăшăр! Кăларăр!» тени илтĕнчĕ. Ăна çийĕнчех туртса кăларчĕç.

Хăрушсăрлăх правилине пăхăнманни пысăк инкек кăтартма пултарнă. Çынна вĕлерсе пăрахаттăмăрччĕ вĕт. Чăн сăмах, васкакан шăтăка сикет.

Пĕренесене пуртăпа чутласах ĕçе вĕçлерĕмĕр, тимĕрбетон ункăсене каç пуличчен вырнаçтартăмăр.

**В.ПЛАТОНОВ.**
**Шупашкар районĕ**








## Ютран килнĕ куҫ пăван

Украинăран Чăваш Ене «гастроле» килнĕ Олег Полухин куҫ пăвма ăста-мĕн. 38 ҫулти услап Етĕрне тата Хĕрлĕ Чутай лавккисенчи сутуҫăсене шахвăртса хăварма ăс ҫитернĕ. Хăй федераци шыравĕнче иккен, ҫӳревне чаплăн паллă тăвас тенĕ пулас.

Хайхи лавккана пырса кĕрет те 5 пинлĕххине туртса кăларать. Унтан ăна ҫутă ҫине тытса пахаланҫи тăвать: «Ан кулянăр, фальшивка мар ку, эп ҫав-ҫав тавара туянасшăнччĕ...» Айван хĕр сутуҫă ăна каялла памалли укҫана тыттарса ярать, 5 пинлĕххи те ун ҫумĕнчех. Сутуҫă сентре патĕнче ăшталаннă самантпа усă курса Полухин вăшт! тухса шăвăнать.

Урамра машина кĕтсе тăрать. Александр Романишин водитель ăна хускатнă ĕнтĕ. Лар та вĕҫтер, никам та шыраса тупаймĕ. Номерĕсене юриех пылчăкпа вараланă. Ҫапах машина тĕсне ас туса юлнă ял халăхĕ. Ҫак мелпе темиҫе лавккана шар кăтартма ĕлкĕрнĕ ултавҫă. Кĕҫех унăн саваламан сак ҫине ларма тивнĕ.



## Пострa йĕркеллĕ, сын путман

– Сăр каҫăвĕнче пурте йĕркеллĕ-и? – ыйтаççĕ чрезвычайлă лару-тăру министерствинчен.

– Так точно, инкек пулман! – ҫарти пек хуравлать раципе А.Лескин.

Ĕҫĕ питĕ яваплă унăн. Ҫĕмĕрле тĕлĕнчи юхан шыв урлă хывнă каҫă ĕҫне-хĕлне йĕркелесе пыма шаннă-ҫке. Командир хăйне пăхăнакансене строя тăратнă та кăтартусем панă.

– Пĕри, сылтăм ҫыранра мĕн пулса иртнине сăнать, тепри – сулахай енчине. Марш хăвăр вырăна!

Ҫыр чаҫĕ теме – салтаксем мар. Ахаль хуралҫăсене унтан-кунтан пуҫтарнă та ĕҫĕ пĕтнĕ. Служба пырать, шалу тӳлеççĕ. Кам та пулин пăр каҫăвĕнче инкеке лексен пĕрремĕш пулăшу параяççĕ-ши вĕсем? Кăна вĕрентмен, ытти ĕҫ мелĕсем пирки те тĕплĕ ăнлантарман. Тĕрĕссипе, техника хăрушсăрлăхĕ енĕпе Лескинăн хăйĕн те пĕлӳ ҫук. Ăна ҫак должноҫа лартакансемшĕн ик айкки те тăвайкки пулас. Кунашкал лару-тăрура инкек пуласси часах.



## Шывсăр чечек хăрать

Интернет, электрон почта... Ҫыхăну хатĕрĕсем вăйлă аталаннипе ҫыру ҫӳретме те пăрахăпăр.

Ҫапах ҫыракан пур, шкулта вĕренни сая кайман. Акă Кӳкеҫри Чечек урамĕнче пурăнакансем район прокуратурине ҫыру ҫитернĕ: «Пирĕн урамăн ячĕ питĕ хитре, анчах вăл поселок айккинерех вырнаҫнипе шыв пăрăхĕсем хума маннă. Районта халăха таса шывпа тивĕҫтермелли программа туса хатĕрленине пĕлтĕмĕр, пирĕн урама каллех пăрса хăварĕҫ-ши? Поселок ертӳҫисем ҫынсен нушине ним вырăнне хумаççĕ, эсир хута кĕрессе шанса ҫыратпăр».

Кӳкеҫ ял тăрăхĕн пуҫлăхĕсем тинех хускалнă. Кăҫалхи ҫурла уйăхĕччен ҫак ҫитменлĕхе пĕтерме шантараççĕ. Сăмаха тытĕҫ-ши?





**С.ГРИШАЕВ**

# Ай, пăта...

Пуян Мĕтрисен Тăванкасĕ. Ял çыннисем ăмăртмалла тенĕ пек чул çурт лартаççĕ. Мĕтрисем те пÿрт кăшкарне шур кирпĕчренех çавăрчĕç. Тăрă тăрласа çĕнĕ пÿрт ĕçки янраттармалла çеç. Анчах пăта çитменни пĕтерет.

Ялти лавккана пăта кÿрсе килессе кĕтсе выртать ак Мĕшĕл Мĕтри. Сасартăк арăмăн сасси илтĕнсе каять:

– Çак ыйхă чăптипех пĕтрĕм! – ятлаçать Тарье. – Тăр! Лариван Шупашкара каять, вăн. Ак укçа, илсе кил пăта!

Мĕшĕл Мĕтри ирĕксĕрех кÿршĕ патне мĕшĕлтетсе каçрĕ. Йăлттам Лариван хирĕçсе тăмарĕ, лартса кайма килĕшрĕ.

Тухса шăхăрчĕç çапла вĕсем хуланалла. «Ларивана́н, шоферта ĕçлекенскерĕн, хурçă учĕ аллинчех те, маттур пулмасăр вăл. Ман килте пĕчĕк урапасăр пусне ним те çук та... Ула качакана кÿлсе тухас-им? Пушали вăрç!» – ятлаçрĕ арăмне Мĕтри хăй ăшĕнче.

Шупашкартан Лариван пĕрле таврăнасса шантармарĕ, Мĕшĕл Мĕтри лавккасем шыраса хула тăрăх утрĕ. Майĕпен пăта та тупрĕ, ытти япаласем те туянчĕ. Кутамкки самай йывăрланчĕ. Вокзалта хуплу çисе хырăмне кăшт лăплантарнă пекки тунă хыççăн Мĕтри кассăна черете тăчĕ. Кассирĕ чăн-чăн усалах пулчĕ пулмалла, билетне Нурăса çитиччен çеç сутать. «Укçа тесе аллă çухрăм танккасси мар-ха», – текелесе хаклă билетах туянчĕ вăл.

Эх, пырать вăл автобуспа ярăнса. Пусĕнче ун пÿрт майласа арăмне савăнтарас шухăш çеç. Акă аслă çул хĕрринчи Тăванкас та куç умне тухрĕ.

– Тăванăм, вăн çавăнта, униче тĕлĕнче, тăрат-ха, – асăрхаттарчĕ Мĕтри шофера.

– Вула, – сĕнчĕ лешĕ тÿрех, хыçалалла пусне сĕлтсе.

– Мĕн вуламалла?

– Çырнине. Хут пĕлместĕн-им?

Мĕшĕл Мĕтри вара шофер çурăмĕ хыçĕнчи авăк кантăк çинелле тинкерчĕ. Унта чăнах та: «Пассажирсене вокзала çитсен тин антармалла», – тесе çырнă иккен.



– Вуларăн-и? – ыйтрĕ шофер.

– Вуларăм.

– Апла пулсан Нурăса çитиччен шăпăрт лар.

– Нурăса мар эп, Тăванкаса каятăп. Акă пирĕн ял... – хыпăнчĕ Мĕтри.

Шофер хăлхасăр пекех, итлемерĕ ăна, тăратмарĕ автобусне.

Нурăсра та билетне Шупашкара çитиччен çеç сутаççĕ. Хăра-хăрах билет илчĕ Мĕтри. Тăванкас курăнна-курăнман вăл шофера пусахлама пуçларĕ:

– Анса юласчĕ çакăнта. Тархасшăн, тăрат!

Шофер хăнк та тумарĕ.

– Вокзал пур-и сирĕн ялта? – ыйтрĕ вăл йăл-йăл кулкаласа. – Çук. Хăçан тăваççĕ, çавăн чухне антарăп... Халь вара хам тăван ларса пырсан та, инструкцие пăсмастăп.

Куççуль тухманни çеç Мĕтрин.

– Вăн, арăм алăкра тăрать, мана кĕтет! – йăлăнчĕ вăл çаплах.

– Кĕтет сана арăму, тăрпалтая, – пÿлчĕ ăна шофер, – хирĕç чупса пырсах майран уртăнать. Пÿрт тăрринче пăта çапса лараканни кам тата?

– Вăл-и? Ара, вăл кÿршĕ, Лариван пулас, сан пекех шофер. Эп çук та, каçнă ĕнтĕ пулăшма...

– Пулăшать сана, – лăх-лăх кулчĕ шофер. – Пĕлетпĕр эпир кÿршĕсем мĕнле пулăшнине...

Мĕтри татах тем каласшăнччĕ, анчах шофера чăрмантарас мар тесе вырăна ларчĕ. Тăванкас часах курăнми пулчĕ.



Шупашкара автобус тĕттĕм пуласпа тин çитрĕ. Автовокзал хупă.

Мĕтри çул çинче паллашнă пĕр çын патне кĕрсе çывăрчĕ. Ирпе вăл сăра ĕçрĕ, хуплу çирĕ те билет туянчĕ. Нурăса çитсен тин аса илчĕ: кутамккине Шупашкарти хваттерех манса хăварнă-мĕн! Нимĕн те тăвайман, каяллах таврăнма тиврĕ унăн. Ку хутĕнче тата мăшкăл пекех автобус Тăванкас тĕлĕнчех çĕмĕрĕлсе кайрĕ. Кил те çывăхрах ĕнтĕ, пур пĕрех Мĕтри автобусран тухмарĕ, арăмĕ патне пăтасăр таврăнма шикленчĕ вăл. Мотор юсаса пĕтернĕ шофер автобуса малалла чуптарчĕ.

Мĕтрин хулара каллех хайхи ырă кăмăллă çын патĕнче çĕр выртма тиврĕ. Ирпе сăра ĕçрĕ, хуплу çирĕ, билет туянма тесе черете тăчĕ, касса патне çитсен хыпăнса ӳкрĕ: укçа çук! Вара вăл Шупашкартан çуранах тухса утрĕ. Кутамкки йывăррине пула икĕ талăк ытла иртрĕ унăн çул çинче. Пĕр яла кĕрсе çĕр выртма тиврĕ. Аран-аран çитрĕ Тăванкаса, мăрьерен хура тĕтĕм палканине курнăскер юлашки вăйне пухса килне хашăлтатса кĕчĕ. Мĕтри йăлтăртатакан пӳрт ăшчиккине пăхса çаврăнчĕ те арăмĕ патнелле утăм турĕ:

– Тарье! Чунăм!

Урай çăвакан Тарье хăранипе шартах сикрĕ.

Ай-уй! Кам ку? – таврăнă кĕпи аркине пилĕкĕнчен вĕçертсе ячĕ вăл. – Мĕн кирлĕ сана? Лариван, тух-ха часрах! Темле çапкаланчăк килсе кĕчĕ. Лариван?!

Шалти пӳлĕмрен Лариван тухрĕ, хуралса пĕтнĕ шăрт сухаллă арçын çине тĕлĕнсе пăхрĕ.

– Сассинчен Мĕшĕл Мĕтри пек те, – тем аса илнĕн пуçне пăркаларĕ Лариван, – çӳçне, сăн-питне пăхсан...

– Эп... эп-çке ку, Тарье, чунăм, пăта илме кайнăччĕ-çке. Илсе килтĕм акă, кутамкка туллиех, – чĕлхине аран-аран çавăрттарчĕ лешĕ.

– Суеçĕ эс, çапкаланчăк! – кăшкăрса пăрахрĕ сасартăк Тарье. – Ман упăшка тахçанах çухалнă!

– Тарье... Чунăм, упăшку...

– Кай, кай, ан сӳпĕлтет! Тупнă эп вăрăм пăта сансăрах. Пӳртне ĕнтĕ туса пĕтертĕмĕр эпир Ларивапа. Марш пирĕн килтен!

Мĕшĕл Мĕтри урăх нимĕн те калаймарĕ, халтан кайса çитнĕскер кутамкки çине тĕшĕрĕлсе анчĕ:

– Ай, пăта!..

**В.КУЗЬМИН**



– Женился?



– А мой муж левша.



– Сними этот ковер. Он меня нервирует.






# Эрех уççи – çул хуппи



**Автомашина рулĕ умне ӳсĕрле ларни ырри патне илсе çитерменнине пĕлмен çын çук та пулĕ. Эрех кĕленчине уçнă хыççăн çул хупăнасси паллă. Анчах правасăр юласса е пысăк штраф тӳлессе пĕлсе тăрсах çула тухатпăр, инкек çине синкек тăватпăр. Иртнĕ çулхи авăн уйăхĕнчен çĕр-шывра саккуна татах хытарчĕç: ӳсĕр водителĕн правине туртса илнисĕр пуçне 50 пин тенкĕ таран штраф хума йышăнчĕç. Çакăн хыççăн тата ӳсĕрле руль умне ларнăшăн 10-15 талăка хупма пултараççĕ. Анчах хăшĕ-пĕри çавах хăнк та тумасть.**

Нарăс уйăхĕн 21–23-мĕшĕсенче республикăра «Ӳсĕр водитель» ятпа профилактика операцийĕ иртнĕ. Виçĕ кун хушшинче полици ĕçченĕсем 72 ӳсĕр водителе тытса чарнă, 31-ĕшĕ хăйсем ӳсĕррине пытарма тăрăшнă, медицина учрежденине кайма килĕшмен. Çакă çăлăнăç шырани мар ĕнтĕ. Кун пек тĕрĕслеврен пăрăннăшăн та правасăр тăрса юлăн тата 30 пин тенкĕ таран штраф тӳлĕн. Саккун çапла ыйтать мар-и?

Кăшт сăра-эрех сыпнипех ӳсĕр пулас çук тесе шухăшлать, тен, чылайăшĕ. Кун пеккисене çакна аса илтерни вырăнлă. Сывласа кăларакан пĕр литр сывлăшра этил спирчĕ 0,16 миллиграмм е ытларах пулсан Раççейри водителе урă теейместĕн.

Америкăра, Европăри çĕр-шывсенче те водительсене пĕрер е икĕ черкке çырла эрехĕ ĕçме ирĕк панă. Урăхла каласан, юнри спирт виçин чиккине палăртнă: пĕр вырăнта – 0,8 промилле таран (Англире, Америкăра), тепĕр çĕрте – 0,05 (Тайланд), 0,08 промилле (Сингапур). Анчах ытлашши ĕçсен вĕсене çав тери пысăк штраф тӳлеттереççĕ. Францире мĕн тĕрлĕ чаплă эрех туса хатĕрлемеççĕ пулĕ. Анчах та кунта çырла эрехне пĕр черкке (0,8 промиллене çитиччен) ытла ĕçсе руль умне ларсан повесткăпа суда чĕнеççĕ тата 135 евро штраф тӳлеттереççĕ. Юнри спирт виçи 0,8 промиллерен иртсен штраф 4500 европа танлашать. Ӳсĕрле инкек тусан 30 пин еврона çитет. Инкекре çын вилсен водительрен 150 пин евро шыраса илеççĕ тата 10 çуллăха тĕрмене лартаççĕ. Францире автомобильпе çӳрес тесен юнри алкоголь виçине тĕрслемелли хатĕр çумра пулмалла. Çапла тăваççĕ те ку çĕр-шыври автомобилистсем. Ресторантан тухсан машинăна лариччен вĕсен хайхи хатĕрпе тĕрĕсленмелле. Хатĕрĕ çумра пулмасан штраф хураççĕ.

Англире руль умне ӳсĕрле ларнăшăн кăна 7200 евро тӳлеттереççĕ.

Раççейпе кӳршĕри Беларуçре юнри спирт виçи 0,04 промиллерен иртсен водитель пĕрремĕш хут 12 500 доллар штраф тӳлет, виçĕ çуллăха машина прависĕр юлать. Инкек кăтартсан тĕрмене те лекет.

Тайландра ӳсĕр водителе пула çын вилсен айăплине персе вĕлереççĕ.

Сингапурта ӳсĕр водителе патаклама пултараççĕ. Çапмалли патак тăршшĕ – метр ытла, хулăнăшĕ – сантиметра яхăн. Патакланнипе пĕрле штраф та илеççĕ.

Китай саккунĕпе руль умне эрех пач ĕçмесĕр лармалла. Водителе ӳсĕрле тытсан уголовлă майпа айăплаççĕ – пĕр уйăхран пуçласа ултă уйăх таран. Кунсăр пуçне виçĕ çул машинăпа çӳреймĕн. Ӳсĕрле инкек тусан вилĕм кĕтет.

Чехире, Венгрире, Словакире, Румынире те автомашинăпа урă пуçпа кăна çӳремелле, саккун пĕр тумлам ĕçме те ирĕк памасть.

Араб Эмирачĕсен çĕр-шывĕсенче «ӳсĕр водитель» текен ăнлав та çук. Унта эрех ĕçниех преступлени шутланать. Ислам тĕнне ĕненекенсен сăра-эрех патне пыма юрамасть.

**Ирина ПАВЛОВА**





# ИКĔ КАРЧĂК

– Хăçан кĕретĕп сан пата, пĕрмай мĕн те пулин тăватăн. Канса ил кăштах, каллех кĕнчеле арлать. Арлать те арлать, арлать те арлать. Пўрнў епле чăтать? Шăтман-и у сан?

– Ма шăттăр у? Ĕççĕр лараймастпăр çав, хам та, старик те.

– Ялти пĕтĕм сурăх çăмĕ сирĕн алă витĕр тухать. Старикку çăм ату йăвалать, эсĕ çип арлатăн, çыхатăн. Пĕтĕм ял тĕлĕнет. Мĕнле ĕлкĕретĕр тулькăш? Мĕн тума кирлĕ çавăн чуль вăй тăкма? Ватăлнă ĕнтĕ, канăр. Пенси илетĕр, çăм ату, алсиш-нуски сутса укçа тăватăр. Ăçта кайса чикетĕр укçуна?

– Пур укçана чикĕн-ха. Пурри çукки мар. Укçашăн çеç-им, ĕççĕр ларма хăнăхман.

– Кан-ха, кан, чарăн йĕкўне çавăрма, аллуна кантар.

– Йĕки мана санпа калаçма пĕрре те кансĕрлемест. Сана мĕн, пенсиччен каллех кивçен кирлĕ-и?

– Ăçтан пĕлетĕн?

– Ахаль пулсан кĕрес çук-ха.

– Паратăн-и?

– Мĕн чухлĕ кирлĕ?

– Пĕр ик çĕр тенкĕ пулсан аванччĕ.

– Пăхам-ха çырса хунине. Эсĕ иртнĕ уйăхрине те парса татман та...

– Аха çав, татаймарăм. Хĕр килчĕ те, пенсие ыйтсах илсе кайрĕ. Хĕр те-ха, парса ятăм. Амăшĕнчен ыйтмасан камран ыйттăр? Эс пур чухне выçса вилместĕп-ха.

– Ĕçлес пулать.

– Ĕмĕрĕпе ĕçленĕ, ватлăхра канасшăн.

– Çĕр улми лартса ўстеретĕн, ни сысна, ни хур-кăвакал тытмастăн. Ма сысна çури илес мар? Ĕçĕ те, какайĕ те пулать.

– Ман сурăх пур. Ăна та пулин ачасем килсе пусса каяççĕ. Ман тем çисе пурăнмалла? Темле «Ролттонсем» илсе килсе тултараççĕ те вара, вĕретсе çикелетĕп. Пырать мана, карчăка.

– Апатне пĕçерме кахалланатăн та...

– Те кахалрах? Пĕччен апат анмасть. Турăх ярса памастăн-и?

– Ыйтакана парас пуль. Ав, чăмăрла улма çи, шурат та çи. Çăкăрне касса паратăп. Аллу таса мар. Кай-кай-кай, ирпе çăвăнмастăн-им?

– Йăраланса тăратăп та тула тухсан мансах каятăп.

– Атя, чăлана ирт, лар. Апачĕ сивĕнеймен-ха, халь çеç антартăм.

– Эй-эй, эс пур чухне выçса вилместĕп-ха.

– Атя, чăмла.

– Пĕрле ла-ар.

– Ларса илес-и вара? Çĕр улмине шуратам-ха, кăнтăрлахи апат тума, ăшалама.

– Сысна какайĕпе ăшалатăн ĕнтĕ, ту-утлă пулать.

– Арçын какайсăр апат çиесшĕнех мар çав.

– Старикку мунчарах, кăçат йăваласах ватăлса ларчĕ. Тўнкке-ха çав шăршлă çăма. Куçĕ те çавăнпах юхать ун. Шăршă вăл куçа та кĕрет те-ха. Ху та пĕрмай куçна шăлан.

– Эмел яма манса кайнă. Вăхăтра ярса тăрсан чиперех, питех кансĕрлемест.

– Чарăна-асчĕ, кана-асчĕ, муритлене-есчĕ.

– Эс ху кахал та çын ĕçленине юратмастăн.

– Эп сире шеллесе калатăп.

– Хăвна шелле-ха, килрен-киле кĕре-кĕре апатланма намăсланмастăн-и?..

– Ийййа-а... Ăшаламасăр та тутлă çĕр улми, питĕ тутлă. Аншарли антармастăн-и?

– Мĕн тесе ĕçтерсе лармалла вара сана кăнтăр кунĕнче? Çитернипе çырлах.

– Ийййа-а... Турăху та тутлă, çăра-а... Хăшĕсен шĕве-ек вара, шуратнă шыв пек. Санăн питĕ тутлă.

– Пулчĕ-и?

– Укçине пар ара. Парăма тататăп, ан хăра, вилме шухăшламастăп.

– Укçу тупăнмасан сурăх çăмĕпе таталатăн. Акă, ил, чик, ан çĕтер.

– Çăкăр илмелĕх пултăр. Сахăр илмеллеччĕ те пĕр висĕтăвату кило... тепĕр çĕр тенкĕ хушаймастăн-и?

– Хушас-ши вара?

– Пар ĕнтĕ, эс памасан кам парĕ? Ялта ытлашши укçа никамăн та çук.

– Ял халăхĕ укçасăрах мар-ха. Ĕçлет, сан пекки сахал. Ме, чик.

– Пулчĕ, кайрăм. Эс ларах кĕнчелўне пĕтĕрсе, лар. Эп лавккана чуптаратăп. Аха, кайрăм.

– Юрĕ эппин.

– Турăхне тепĕр курка ярса памастăн-и? Пур пĕр сыснуна çитеретĕн, э-э...

– Ĕç, ара, тăраниччен, ĕç. Кăнтăрлахи, каçхи апат туса кай. Çĕр улми сакай тулли, çитет. Паянлăха ыйткаласа ан çўре.

– О-ой, эс пулсан выçă вилместĕп... Ара, панине ма илес мар? Янине ма сыпас мар? О-ой, лайăх анать, ой, лайă-ăх... Пулчĕ. Юрĕ, каяс пуль шампа хырăма силлесе.

– Кай, чармастăп.

**Светлана АСАМАТ**

Строительсем эпир. Çурт-йĕр лартатпăр. Çĕпритун, техникумран тинтерех çеç вĕренсе тухнăскер, – пирĕн мастер. Катя – каменщица. Вăт çавна, пиçнĕ майăр пек чăмăркка хĕре, куç хывнă иккен Çĕпритун. Пирĕншĕн мĕн – савăнтăмăр кăна, лайăх мăшăр. Иккĕшĕ те çамрăк, хитре. Тулĕк, ватă каменщик Эриван калашле, вĕсем хăпартнă кирпĕч стена айккинелле тайăлнă – ăнман. Катя Çĕпритунпа туслашма килĕшмен. Мĕншĕн-и? Юратăва ăçтан ăнланса пĕтерĕн...

Кирпĕчсене лайăх растворпа çыпăçтарнă евĕр, Катя ун чĕрине чăннипех хăйпăтмалла мар çатăрланă-ши – каччă каялла чакмарĕ. Пирĕн шутпа, алă сулмаллаччĕ çеç ĕнтĕ апăршан. Хĕр юратмасть тĕк ма çилам сĕкĕнмелле? Сахал-и ытти хĕр упраç! Анчах Çĕпритун шалт тĕлĕнтерчĕ. Хальччен кунашкал «мăшкăла» курманскер, куренӳ туйăмне хĕтĕртсе, Катьăна куç кĕрет йĕрлеме пуçларĕ. Шухăшне пытармасть, мĕнле-ха апла, ăна, пуçлăха, çав каменщица хирĕçлеме хăять?

Пĕррехинче вăл стройкăна кушак илсе килчĕ. Чăнах, чăнах. Çинçешке кушак ами. Килсĕр-хуçасăрскер пулас – хăвăрт иленчĕ, хуçинчен хăпма та пĕлмест. Ачашлама тытăн çеç, куçĕсене мăчлаттара-мăчлаттара рехетлĕн мăрлатать.

Кăнтăрлахи апат çисен, ĕçе тытăниччен пăртак сывлăш çавăрса илес тесе, эпĕ юлташсемпе пĕрле «вагончик» картлашки çине тухса ларнăччĕ. Сасартăк Çĕпритун сасси илтĕнсе кайрĕ:

– Ну, Катя, ăнлантар, çĕр каç ăçта çапкаланса çӳрерĕн?

Катя курăнмасть. Апла кампа калаçать Çĕпритун?



# Юрату кушакĕ

– Чĕнместĕн? Чупма пĕлетĕн тĕк, явап тытма та хăюлăх çитер. Кирпĕч купи хыçĕнче кампа мĕн хăтланнине хам куртăм вĕт!

Эпир ахăрса ятăмăр. Каччă... кушака вăрçать иккен! Калама маннă, мастер ăна Катя тесе ят панă. Çав самантра хĕрарăмсен «вагончикĕн» алăкĕ чĕриклетрĕ те, каменщик Катя курăнчĕ. Пичĕ-куçĕ вут хыпнă евĕр хĕп-хĕрлĕ.

– Ухмах! – пăшалпа пенĕн янлатрĕ хĕр сасси.

Çĕпритун ун еннелле çаврăнса пăхмарĕ, кушакне пӳрнепе юна-юна татах мăкăртатрĕ:

– Хăвна чараймасăр аçу-аннӳ ятне яратăн вĕт, намăссăр!

Тин ăнланса илтĕмĕр, мастер хĕртен çапла майпа кулма-мăшкăллама шут тытнă-мĕн.

– Çĕпритун, чарăн! – макăрас пек кăшкăрчĕ Катя.

– Хă, тӳр сăмах килĕшмест-и! – каччă кушака пуçĕнчен пӳрнепе шаккаса илчĕ. – Итле, итле! Тĕрĕслĕхрен пăрăнаймăн, пĕлтĕркке!

Хĕр ача «вагончик» алăкне хупрĕ.

Вăт çакăнтан пуçланчĕ вара. Пушă вăхăт тупăнтăр çеç – Çĕпритун кушакне ярса тытать те тĕрлĕ «çылăхшăн» тустарма тытăнать. Çук, шăппăн мар, хыттăн, ыттисем те илтмелле. Мĕн кăна кăшкăрмасть-ши! Хура пылчăк татăкĕсем çатлатнăн намăс сăмахсем те сирпĕне-сирпĕне тухаççĕ çăварĕнчен...

Малтан кулма пăхнăччĕ те часах ăнлантăмăр, чармасан ку этем сĕмсĕрленнĕçемĕн сĕмсĕрленет. Катя йăлт улшăнчĕ, тăтăшах макăрать. Ĕçрен пăрахса кайма та шутларĕ, аран-аран ӳкĕте кĕртрĕмĕр.

– Ара эп кушака вăрçап-иç! – шăл йĕрме пăхрĕ каччă, эпир асăрхаттарсан.

– Эс пире шăтăк тăрăллă тесе ан шутла! – харăс тапăнтăмăр ăна. – Хĕре тек кӳрентерме памастпăр. Атту... пĕрле ĕçлесси темле...

Чăнах та, уйрăлма тиврĕ мастерăн пирĕнтен, тухса кайрĕ. Ун кушакĕ вара, «юрату кушакĕ», каллех хуçасăр юлнăскер, ниçта кайса кĕрейми чупкаларĕ, макăрчĕ.

– Катя! – чĕнчĕ ăна Катя. – Айта ман патăма. Пĕрле пурăнăпăр.

Кушак ун çумне пырса пархатарлăн çупăрланчĕ.

**Аркадий КАЗАНОВ**




– Катя, где моя гитара?

# Мĕн хаяртарах – çавна лĕрккеççĕ

Юлашки икĕ çулта Çĕмĕрлере пĕр предприяти те хута яман. Хаяр шĕвек кăларакан Киреев «завочĕ» вара пĕр кăлтăксăр ĕçленĕ. Мăрйинчен тĕтĕм тухмасть пулин те продукцие ещĕкĕ-ещĕкĕпе тиесе ăсатаççĕ:

– Ну-ка, вăр-вартарах, атьсемĕр, – аллине кăмăллăн сăтăркалать Сергей Киреев.

Пĕтĕм хулапа район халăхне йÿнĕ эрехпе тивĕçтерме тĕллев лартнăши ку этем? Чул хула облаçне кайса техника спирчĕ тиесе килет, кайран çавна кранри шывпа хутăштарса ярăнтараççĕ. Технологи питĕ ансат, кĕсьери янтă укçа чуна ăшăтать.

Хĕрĕх урлă каçнăскер тавçăрулăхĕпе чылайăшне тĕлĕнтерет. 2011 çулхи çĕртме уйăхĕнче сăмакунçăсен бригадине йĕркеленĕ, унта çамрăксемпе 70 çулти карчăксене те явăçтарнă. Тăваттăн-пиллĕкĕн ĕçленĕ ун патĕнче. Пĕрисем пуш кĕленче пухнă, теприсем ăна наркăмăш тултарса сутнă. Лавккаринчен чылай йÿнĕрех сĕнсен кам туянмĕ ĕнтĕ.

– Гаражри бизнес путланнишĕн питĕ кулянать халь Киреев, – терĕç йĕрке хуралçисем.

**В. ГРИГОРЬЕВ**









Сăмахсăрах. Без слов.



**Николай КРАСНОВ**
**(Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ**

Сылтăмалла: 1. Аслати авăтмасăр... кĕперĕ хывăнмасть (ват. сăм.). 3. Пахча çимĕçĕ. 7. ... хайĕн кукшипе те каппаять (каларăш). 9. ...ра çини киле çитмест (ват. сăм.). 10. Лутра инке сак çинче, пӳллĕ инке ту çинче (туп. юм.). 11. Типĕ ... тип вар урлă каçма (каларăш). 14. Типографи шрифчĕ. 15. Чăвашăн – чăкăт, ...ăн – турăх (ват. сăм.). 19. ... калаçмасан, ырă пулмасть (каларăш). 20. Шыв çĕклеймĕ, çĕр çĕклĕ (туп. юм.). 21. Пуçĕ пур та – çӳçĕ çук, çăварĕ пур та – сасси çук (туп. юм.). 24. Красноармейски районĕнчи ял. 25. Хĕлле ăшă, çулла сивĕ (туп. юм.). 26. Сутуçăн ĕç хатĕрĕ.

Аялалла: 1. Дракон. 2. ... авăснипе кĕрпе пулмасть (ват. сăм.), 4. Шăрăх. 5. Хими элеменчĕ. 6. Каласан та – ..., каламасн та – ... (туп. юм.). 7. «Чи ăсли» телепередачăна ертсе пыраканĕ. 8. ... нумай çул йĕтĕн лайăх пулать (ват. сăм.). 12. ... илемĕ – килĕнтеш (каларăш). 13. Шыва кĕрсен те типĕ çӳрет (туп. юм.). 16. Сусăр çын. 17. Пулли шывра, хӳри сăртра (туп. юм.). 18. Пĕрре алăран вĕçерĕннĕ ...на тытма ан шухăшла (каларăш). 22. Африкăри наркăмăшлă шăна. 23. ...ран пăс тухнă тет (ват. сăм.).

**Иртнĕ номерте пичетленнĕ капкăнкаçмăш хуравĕсем:**

**Сылтăмалла:** 7. Çарăк. 8. Каштан. 9. Чăваш. 12. Çăнăх. 13. Ака. 15. Тăман. 18. Арçунаккасси. 19. Скандал. 22. Костадинова. 25. Салют. 26. Ура. 28. Капан. 31. Кулач. 32. Платник. 33. Юсман.

**Аялалла:** 1. Тар. 2.Хăвăл. 3. Аппа. 4. Атма. 5. Тăван. 6. Пас. 10. Йăмра. 11. Сăмса. 14. Краснодар. 16. Тунката. 17. Саванна. 20. Полюс. 21. Автан. 23. Патак. 24. Шасси. 26. Урал. 27. Анне. 29. Çул. 30. Сак.






**– Интернет – это такая паутина, где много-много голых мух.**



Журналти ӳкерчĕксене www.cartoonbank.ru сайтран илнĕ